27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
АВГУСТ
8
ЫТЛАРИКУН
155 (6650) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне КОНЕВА

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла насупления туса пырса, СТРЫЙ шывӗ урлӑ каҫнӑ та паян, августӑн 5-мӗшӗнче, СТРЫЙ хулине — чугун ҫулсен пысӑк узелӗпе тӑшманӑн Карпат тӑвӗсем умӗнчи оборонин тӗреклетнӗ паха пунктне — штурмласа туртса илнӗ.

СТРЫЙ хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ГРЕЧКО генерал-полковникӑн, ШЕВЕРДИН генерал-лейтенантӑн, ЛАЗЬКО генерал-майорӑн, ГОРДЕЕВ генерал-майорӑн, ИВАНЧУР полковникӑн, ГЕРАСИМОВ полковникӑн, ПАХОМОВ полковникӑн, ЯНКОВСКИЙ полковникӑн, ГРИНЧЕНКО полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-майорӗн БРИЧЕНОКӐН тата БРОЗГОЛЬ полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн РАЙКИНӐН тата СТРЕЛЕЦ подполковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн КРАСОВСКИН летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ТУПИЧЕВӐН саперӗсем, БЕЛЯНЧИК полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, СТРЫЙ хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑсссене «СТРЫЕВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе награйдӑлама тӑратас.

Паян, августӑн 5-мӗшӗнче, 23 сехет те 30 минутӑра хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, СТРЫЙ хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, СТРЫЙ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи августӑн 5-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Генерал-полковника ПЕТРОВА

Украинӑри 4-мӗш фронт ҫарӗсем, ӑнӑҫлӑ наступлени туса пырса, паян, августӑн 6-мӗшӗнче Украинӑн пысӑк промышленность центрӗпе область хулине — ДРОГОБЫЧА штурмласа туртса илнӗ. ДРОГОБЫЧ вӑл ҫулйӗрсен паха узелӗ тата Карпат тӑвӗсем урлӑ каҫса каймалли вырӑнсене хӳтӗлесе тӑракан тӑшман оборонин тӗреклетнӗ пункчӗ пулнӑ.

ДРОГОБЫЧ хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ГРЕЧКО генерал-полковникӑн, ГОРДЕЕВ генерал-майорӑн, ЛАЗЬКО генерал-майорӑн, ДРЯХЛОВ полковникӑн, ГРИНЧЕНКО полковникӑн, ПАХОМОВ полковникӑн, ИВАНЧУР полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-майорӗн БРИЧЕНОКӐН, БРОЗГОЛЬ полковникӑн, ЖИБУРГУС генерал-майорӑн, УРМАНОВ полковникӑн, НОВИКОВ полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн РАЙКИНӐН тата СТРЕЛЕЦ подполковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-майорӗн САМОХИНӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн НАНЕЙШВИЛИН тата КОТЕЛЬНИКОВ полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ТУПИЧЕВӐН, ОСТАПОВ полковникӑн, ВОРОНОВ майорӑн, МАРХОРЯН майорӑн, ШИЦОВ майорӑн саперӗсем; БЕЛЯНЧИК полковникӑн, ЕНЦЕВ подполковникӑн, МИШИН подполковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ДРОГОБЫЧ хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑсссене «ДРОГОБЫЧСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе награйдӑлама тӑратас.

Паян, августӑн 6-мӗшӗнче, 22 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, УКРАИНӐРИ 4-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ДРОГОБЫЧ хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ДРОГОБЫЧ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи августӑн 6-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне КОНЕВА

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, вӑйлӑ ҫапӑҫусем хыҫҫӑн, паян, августӑн 7-мӗшӗнче, САМБОР хулине пысӑк чугун ҫул узелне — нимӗҫсен Карпат тӑвӗсем умӗнчи оборонин тӗреклетнӗ паха пунктне — туртса илнӗ.

САМБОР хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче МОСКАЛЕНКО генерал-полковникӑн, БУШУЕВ генерал-майорӑн, ВАСИЛЬЕВ полковникӑн, СИПУН полковникӑн, ГАЛЬЦЕВ полковникӑн, АНДРИЕНКО полковникӑн, ДОЦЕНКО полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-майорӗн ЛИХАЧЕВӐН, артиллери генерал-майорӗн САНЬКОН, артиллери генерал-майорӗн КОЛЕСОВӐН, ДОБРИНСКИЙ полковникӑн артиллерисчӗсем; БЕЛЯЕВ полковникӑн танкисчӗсем; БЫСТРОВ полковникӑн, ЮЗЕЕВ полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ВАРВАРКИНӐН саперӗсем; ТАРУНИН полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, САМБОР хулине туртса илнӗ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑсссене «САМБОРСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе награйдӑлама тӑратас.

Паян, августӑн 7-мӗшӗнче, 21 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, САМБОР хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, САМБОР хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи августӑн 7-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Генерал-полковника ПЕТРОВА

УКРАИНӐРИ 4-мӗш фронт ҫарӗсем, наступление малалла туса пырса, паян, августӑн 7-мӗшӗнче, тӑшманпа ҫапӑҫса БОРИСЛАВ хулине — Хӗвеланӑҫ Украинӑн нефть кӑларакан промышленноҫӗн пысӑк центрне — туртса илнӗ.

БОРИСЛАВ хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ГРЕЧКО генерал-полковникӑн, ЛАЗЬКО генерал-майорӑн, АФОНИН генерал-майорӑн, ИВАНЧУР полковникӑн, ПАХОМОВ полковникӑн, НОВОЖИЛОВ полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-майорӗн БРИЧЕНОКӐН, НОВИКОВ полковникӑн, ВОРОБЬЕВ полковникӑн, ТЕРЕХИН подполковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн РАЙКИНӐН танкисчӗсем; авиаци генерал-майорӗн САМОХИНӐН летчикӗсем; АСТАПОВ полковникӑн, ШЕЛУДЬКО подполковникӑн саперӗсем; БЕЛЯНЧИК полковникӑн, ЖУД подполковникӑн, МИШИН подполковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, БОРИСЛАВ хулине туртса илнӗ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑсссене «БОРИСЛАВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе награйдӑлама тӑратас.

Паян, августӑн 7-мӗшӗнче, 22 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, УКРАИНӐРИ 4-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, БОРИСЛАВ хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, БОРИСЛАВ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи августӑн 7-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

АВГУСТӐН 5-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Августӑн 5-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем РЕЗЕКНЕ (РЕЖИЦА) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ВИКШНИ, САЛЕНЫЭКИ, ЛАБАНЫ, РОМУЛИ, ЗЕЛТЫНИ, ДАРКЕВИЧИ, ОДЗИЕНА, РУЦАНИ, МЕЖРАТИТЕС, СИКСТУЛИ ятлӑ пысӑк ялсем.

КАУНАС (КОВНО) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан 40 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ДИДЗЮЛИ, КАЛЬНИШКИ, БУТКИШКИ, КРУКИ, ИЛГОВО, ЮРГБУДЗЕ, СТОШКИ, ДЫДВИЖЕ, ДРЕЙБУЛИНЫ, СЕМЕНЕЛИШКИ ятлӑ пысӑк ялсем.

СЕДЛЕЦ хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан 70 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — КАМЕНЬЧИК, ДЗЕЖБЫ, ЯБЛОННА, РОГУВ, КОЖУХУВ, ЯРОСЛАВЫ, КОВЕСЫ, СЬВИНЯРЫ, МОКОБОДЫ, МЕНЧИН, ПРОШЕВ ятлӑ пысӑк ялсем.

САН шывӗпе ВИСЛА шывӗ пӗрлешнӗ ҫӗрти виҫкӗтеслӗхре пирӗн ҫарсем тӑшман плацдармне пӗтерсе тӑкассишӗн ӑнӑҫлӑ ҫапӑҫнӑ, РОЗБАДУВ, ТАРНОБЖЕГ хулисене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — МАЙДАН, СКСВЕЖИН, ВЖАВЫ, ГОЖИЦЕ, СОБУВ, МОКШИШУВ ятлӑ пысӑк ялсем тата РОЗВАДУВ, ЗБЫДНЮВ, СОБУВ, ТАРНОБЖЕГ чугун ҫул станцийӗсем.

САНДОМИР хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах ВИСЛА шывӗн сулахай хӗрринчи плацдарма аслӑлатасшӑн ҫапӑҫнӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта туртса илнӗ.

ЖЕШУВ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 40 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ВОЙКУВ, РОЖНЯТЫ, МЛОДОХУВ, ЦЫРАНКА ятлӑ пысӑк ялсем тата ПАДЕВ, ЯСЬЛЯНЫ, ХОЖЕЛЮВ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, ҫаплах наступлени туса пырса, СТРЫЙ шывӗ урлӑ каҫнӑ та августӑн 5-мӗшӗнче пысӑк чугун ҫул узелне тата нимӗҫсен Карпат тӑвӗсем умӗнчи оборонин тӗреклетнӗ паха пунктне — СТРЫЙ хулине штурмласа туртса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Августӑн 4-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 128 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 85 самолетне персе ӳкернӗ.

АВГУСТӐН 6-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Августӑн 6-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ПСКОВ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ШУБЕНКИ, ЛАПКОВА, ЛАУРА, ЗАХАРЬЕВА, КУСТОВКА, ЛЮБЯТОВА, БЛУМРЕЙНИ, СВАРИ, ДУНДУРИ, МЕЖАГАЙЛИ ятлӑ пысӑк ялсем.

РЕЗЕКНЕ (РЕЖИЦА) хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан 40 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ВИЛКАТА, ЯУНЗЕМИ, ЛЫЕГРАДЭ, КРИПАНЫ, СИЛГАЛИ ятлӑ пысӑк ялсем тата МЕЖЦИЭМС ятлӑ чугун ҫул станцийӗ.

КАУНАС (КОВНО) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ДУБИССА шывӗ урлӑ каҫнӑ та тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — МИЛОШАЙЦЕ, МАНКУНЫ, РОЖАЙЦЫ, ИОДАЙЦЕ, ПОГОВСАНЦЫ, КАРАЛЬГИРЫ, ВАМБОЛЕ ятлӑ пысӑк ялсем.

САНДОМИР хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем тӑшманӑн ВИСЛА шывӗн сылтӑм хӗрринче САН вӑррипчен пуҫласа ТАРНОБЖЕГ хули патне ҫитиччен выртакан плацдармне пӗтерсе тӑкнӑ.

ЖЕШУВ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем МЕЛЕЦ хулипе чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ВИСЛОКА шывӗ урлӑ каҫнӑ та ҫав шывӑн хӗвеланӑҫ енче халӑх пурӑнакан 20 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ОСТРУВЕК, УЙСЬШЕ, БОРОВА, ГЛИНЫ МАЛЫ, САДКОВА ГУРА, СУРОВА, ЛЫСАКУВЕК, ГРАДЫ, ВОЛЯ ПЛАВСКА, ЗЛОТНИКИ, ЖЕНДЗЯНОВИЦЕ ятлӑ пысӑк ялсем.

УКРАИНӐРИ 4-мӗш фронт ҫарӗсем, ӑнӑҫлӑ наступление вӑйлатса пырса, августӑн 6-мӗшӗнче ҫулсен паха узелӗпе тӑшман оборонин тӗреклетнӗ хӑватлӑ пунктне — Украинӑн облаҫӗ тата промышленность центрне ДРОГОБЫЧ хулине штурмласа туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 50 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — Дрогобыч облаҫӗнчи район центрӗ МЕДЕНИЦА хули, Станислав облаҫӗнчи район центрӗ БОЛЕХОВ хулипе чугун ҫул станцийӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Августӑн 5-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 151 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 108 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Псков хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тӑшман, малтанах хатӗрлесе хунӑ оборона позицийӗсем ҫинче ҫирӗпленсе ларса, хытӑ хирӗҫ тӑнӑ. Артиллери вӑйлӑ персе тӑнӑ хыҫҫӑн совет гвардеецӗсем атакӑна кӗрсе кайнӑ та нимӗҫсен оборонине татнӑ. Ҫитӗнӗве вӑйлатса пырса, пирӗн ҫарсем тӑшманӑн питӗ вӑйлӑ тӗреклетнӗ Лаура пунктне ҫурҫӗр енчен тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ енчен ҫавӑрса илнӗ, вара пӗр вӑхӑтрах виҫӗ енчен те пырса ҫапса, нимӗҫсен гарнизонне аркатса тӑкнӑ. 600 гитлеровеца ытла вӗлерсе пӗтернӗ. Трофейсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Резекне хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем нимӗҫсем хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та, малалла ҫав тери хӑвӑрт кайса, Резекне хулипе Мадона хули хушшинчи шоссе ҫулӗ тӑрӑхӗнче Айвиэксте шывӗ ҫине тухнӑ. Пирӗн чӑсӗсем малалла ҫав тери хӑвӑрт тата кӗтмен ҫӗртен куҫса пынине пула, тӑшман Айвиэксте шывӗ урлӑ хывнӑ каҫӑсене ҫӗмӗрсе хӑварма та ӗлкӗреймен. Совет боецӗсем пӗр чарӑнса тӑмасӑр шыв урлӑ каҫнӑ та унӑн сылтӑм хӗрринче ҫирӗпленсе ларнӑ. Ҫӗрӗпех хаяр ҫапӑҫусем пынӑ. Пирӗн чӑсӗсем вӑрманлӑ пысӑк тӑрӑха гитлеровецсенчен тасатнӑ та Межциэмс чугун ҫул станцине штурмласа туртса илнӗ. Пӗр пин нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. 300 гитлеровеца тыткӑна илнӗ. 20 тупӑ, 100 пулемет тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Пирӗн зенитчиксем икӗ кун хушшинче нимӗҫсен 12 самолетне персе ӳкернӗ.

Хаҫатсем ҫинче совет патриочӗсем упӑшкипе арӑмӗ Иванпа Александра Бойкосем хӑйсен перекетлесе пухнӑ укҫипе танк илни ҫинчен пӗлтернӗччӗ. Халӗ вӗсем Хӗрлӗ Ҫарта, фашистла нимӗҫ захватчикӗсемпе ҫапӑҫаҫҫӗ. Кӗҫӗн техник-лейтенант Александра Бойко командир пулса тӑракан тата кӗҫӗн техник-лейтенант Иван Бойко танк водителӗ пулса тӑракан танк экипажӗ икӗ эрне хушшинче тӑшманӑн 5 танкӗпе икӗ туппине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Каунас (Ковно) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре Дубисса шывӗ улӑхӗнче ҫаплах ҫапӑҫусем пынӑ. Нимӗҫсем совет ҫарӗсене Дубисса шывӗ урлӑ каҫма чарасшӑн пулнӑ, анчах та вӗсен ӗҫӗ ӑнӑҫман. Пирӗн саперсен подразделенийӗсем, тӑшман персе тӑнине пӑхмасӑрах, кӗперсем хывса лартнӑ. Совет пехоти, ун хыҫҫӑн танксемпе артиллери те шыв урлӑ каҫнӑ та нимӗҫсене ҫунтарма тытӑннӑ. Хаяр ҫапӑҫусем хыҫҫӑн пирӗн ҫарсем анлӑ участокра Дубисса шывӗн хӗвеланӑҫ хӗррине гитлеровецсенчен тасатнӑ. Кун каҫиччен нимӗҫ пехотине пӗр полка ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

Каунас хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тӑшман хытӑ хирӗҫ тӑрать. Нимӗҫсем татти-сыпписӗр ҫӗнӗ вӑйсем илсе пыраҫҫӗ. Вӗсем кунти ҫапӑҫӑва халь ҫеҫ Германирен килсе ҫитнӗ пӗрремӗш гренадерски, «Хӗвелтухӑҫ Пруссия» ятлӑ дивизине кӗртсе янӑ. Паян пулса иртнӗ ҫапӑҫусем хыҫҫӑн совет пехотинецӗсемпе танкисчӗсем танксене хирӗҫ алтса хунӑ тарӑн шӑтӑксем урлӑ каҫнӑ та траншейӑсен виҫӗ линине татнӑ, ҫав шӑтӑксемпе траншейӑсене нимӗҫсем персе тӑмалли йышлӑ хатӗрсемпе хӳтӗлесе тӑнӑ тата броньӑран калпаксем нумай туса тултарнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 800 виллине ҫити выртса юлнӑ. Нимӗҫсен 28 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Жешув хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чӑсӗсем юлашки кунсенче нимӗҫсен пысӑк группировкипе ҫапӑҫнӑ. Тӑшмана халран кӑларнӑ хыҫҫӑн совет боецӗсем гитлеровецсене татӑклӑн пырса ҫапнӑ. Вислока шывӗ хӗррине хӗстерсе лартнӑ нимӗҫсене питӗ пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. Пирӗн ҫарсем Мелец хулине тытса илнӗ те, Вислока шывӗ урлӑ каҫса, халӑх пурӑнакан пунктсене чылай туртса илнӗ. Кун каҫиччен нимӗҫсен 40 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ. Тыткӑна нумай илнӗ.

* * *

Украинӑри 4-мӗш фронт ҫарӗсем ӑнӑҫлӑ наступлени туса пынӑ. Шурлӑхлӑ вырӑн урлӑ каҫса кайса, совет чӑсӗсем Меденица хулине туртса илнӗ те Дрогобыч хули патнелле ыткӑннӑ. Дрогобыч хули ҫулйӗрсен паха узелӗ тата нимӗҫсен Карпат тӑвӗсем урлӑ каҫса каймалли вырӑнсене хӳтӗлесе тӑракан тӗреклетнӗ паха пункчӗ пулса тӑрать. Дрогобыч хулине хӳтӗлеме тӑшман хӑйӗн пысӑк вӑйӗсене янӑ. Пирӗн ҫарсем тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та, ӑна хыҫҫӑнах хӑваласа пырса, хула патне таччӑнах пырса тухнӑ. Паян пирӗн ҫарсем Украина область центрне Дрогобыч хулине штурмласа туртса илнӗ. Тӑшмана ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухату кӳнӗ. Боеприпас, апат-ҫимӗҫ тата ҫар пурлӑхӗн пысӑк склачӗсене, вагонсемпе паровозсем нумай, автомашинӑсем тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗ Финн заливӗнче тӑшманӑн 2 тральщикне тата хуралта ҫӳрекен пӗр катерне шыва путарнӑ.

Тӑван ҫӗршыв наступлени туса пыракан Хӗрлӗ Ҫара 145-мӗш хут салют пани

Августӑн 5-мӗшӗнче наступлени туса пыракан Хӗрлӗ Ҫарӑн Стрыевски дивизийӗсене Мускав Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют пачӗ. Ҫакӑ вӑл 145-мӗш салют пулчӗ. Ҫав салют пирӗн столица Орелпа Белгород хулисене ирӗке кӑларнӑ паттӑрсене салют парса саламланӑранпа шӑп ҫулталӑк тултарнӑ кун янраса кайрӗ.

Ҫапла ӗнтӗ наступлени тӑвакан Хӗрлӗ Ҫар ҫулталӑк хушшинче Орел патӗнчен пуҫласа Хӗвелтухӑҫ Пруссипе Варшавӑна пырса кӗмелли вырӑнсем патне ҫитиччен, Карпат тӑвӗсемпе Польшӑн кӑнтӑрти районӗсем патне ҫитиччен утса тухнӑ ҫула 145 салют ҫутатса тӑрать. Хӗрлӗ Ҫар халӗ ӗнтӗ Румыни территорийӗ ҫинче ҫапӑҫать, вӑл Совет Союзӗпе Финлянди хушшинчи хамӑрӑн государство чиккине ҫитнӗ. Ҫав вӑхӑт хушшинче темиҫе вунӑ пин тӑваткӑл километра, темиҫе ҫӗр пысӑк хулана, нумай пин яла фашистла нимӗҫ захватчикӗсенчен тасатнӑ. РСФСР-ӗн пӗтӗм территорине, пӗтӗм Украинӑпа Белоруссине тенӗ пек, Литвапа Латви, Эстони тата Карел-Финн ССР-ӗсен чылай пысӑк пайне ирӗке кӑларнӑ, тӑшманӑн анлӑ та хӑватлӑ оборонин темиҫе вунӑ линине аркатса тӑкнӑ, Европӑри пысӑк шывсем — Днепр, Десна, Днестр, Южный Буг, Прут, Серет, Западная Двина, Березина, Неман, Западный Буг, Сан, Висла тата ытти шывсем урлӑ каҫнӑ, тӑшмана ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен нимӗнпе витме ҫук ҫухатусем тӳстернӗ. (ТАСС).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Танк промышленноҫӗн Халӑх Комиссарне В. А. Малышев юлташа Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ ятне парасси ҫинчен

Танксем тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем тӑвас тӗлӗшпе, ҫавӑн пекех тата вӑрҫӑра кирлӗ машинӑсен ҫӗнӗ тӗсӗсене тума пуҫлас тата вӗсене Хӗрлӗ Ҫара ҫителӗклӗ парса тӑрас тӗлӗшпе уйрӑмах паха ӗҫсем тунӑшӑн танк промышленноҫӗн Халӑх Комиссарне Вячеслав Александрович Малышев юлташа, Ленин орденӗ тата «Ҫурлапа Мӑлатук» ылттӑн медаль парса, Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1944 ҫулхи августӑн 5-мӗшӗ.

Поляксен халӑх совечӗн председателӗ Б. Берут господин тата Польша халӑхне ирӗке кӑларассишӗн кӗрешекен комитетӑн председателӗ Э. Осубка-Моравский господин Мускава килни

Августӑн 5-мӗшӗнче Мускава Люблин хулинчен Поляксен халӑх совечӗн председателӗ Болеслав Берут господин, Польша халӑхне ирӗке кӑларассишӗн кӗрешекен комитетӑн председателӗ Э. Осубка-Моравский господин, Польша халӑхне ирӗке кӑларассишӗн кӗрешекен комитет председателӗн заместителӗ А. Витос, Польша ҫарӗсен главнокомандующийӗ генерал-полковник М. Роля-Жимерский тата ыттисем те килнӗ.

Мускав аэродромӗнче вӗсене СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн заместителӗ А. Я. Вышинский, Польша халӑхне ирӗке кӑларассишӗн кӗрешекен комитет председателӗн заместителӗ В. Л. Василевская, СССР Наркоминделӑн 4-мӗш Европа отделӗн заведующийӗ В. А. Зорин, СССР Наркоминделӗн протокол отделӗн заведующийӗн ӗҫӗсене туса тӑракан Г. И. Фомин, Оборона Халӑх Комиссариачӗн тулашри ҫыхӑнусен отделӗн начальникӗ генерал-майор В. Н. Евстигнеев, Мускав хули коменданчӗ генерал-майор К. Р. Синилов тата ыттисем те хирӗҫ тухса кӗтсе илнӗ.

Вӗсене кӗтсе илнӗ чухне аэродромра хисеплӗ хурал тӑнӑ. Польшӑн тата Совет Союзӗн государство гимнӗсене каланӑ. Аэродрома Польша тата Совет Союзӗн флагӗсемпе илемлетнӗ.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçе кашни колхозникпа колхозница хутшăнтăр!

Государствăна тырă парассĕ

ПЕПРЕС, августăн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем тырă вырса, авăн çапас ĕçсене çăрăлса пыраççĕ. Малта тырăсене «Молния» колхоз вырса пĕтерет ĕнтĕ. Вăл район колхозĕсенчен пуринчен малтан государствăна 7 центнер тырă леçсе панă. Çавăн пекех «Большевик», «Коммунар», «8-мĕш марта» колхозсем [illegible] государствăна тырă парассине пуçларĕç. «8-мĕш марта» колхозра норма [illegible] тултараканасен йышĕ ӳссе пырать. Çапла, А. Носова колхозница 250 процент,

М. Павлова, В. Журавлева юлташсем 170-шер процент тултараççĕ. [illegible] Калинин ячĕпе [illegible] тăракан колхоз руководителĕсем колхозри вăйсене тулли усă курассишĕн тăрăшмаççĕ [illegible]. Тырпул пухса кĕртес ĕç питех те сӳрĕк пырать. [illegible] кĕлте [illegible] пырать.

П. КУРАКОВ.

Коммунистсем колхозри вăйсене мобилизацилеме пулăшаççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ, августăн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Тырпулсене пухса кĕртес [illegible] колхозсенчи коммунистсем [illegible]. Вĕсем, [illegible] стахановла ĕçлесе [illegible].

Тусари территориальнай пуçламăш парт. организаци (секретарĕ Павлов юлташ) [illegible] коммунистсен [illegible].

[illegible] малта пыракан колхозниксен ячĕсене тата ĕç [illegible].

Юлашки вăхăтра [illegible] коммунистсемпе агитаторсем тата комсомолецсем колхозниксене ССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн 1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановленине [illegible].

[illegible]

Г. АЛЕКСЕЕВ.

ВАСИЛИСА СТЕПАНОВА ЕРТСЕ ПЫРАКАН ВАЙЛĂ ТЫРПУЛ ЗВЕНИ

Тăватă çул каярах ăна бригадăри колхозниксем хăйсен [illegible] звеньевăя суйларĕç. Василиса ун чухне питех те çамрăк, 15 çулхи хĕрача çеç пулнă. [illegible]

Ĕçен анаçлахе — звено членесемпе килĕшсе ĕçлениччe. Кашни ĕçех вăл йĕркеллĕ ертсе пыма пĕлнĕ. Çапла вара вăл ертсе пыракан звено, малтанхи çулах тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртсе, ыттисенчен мала тухнă.

Пысăк тухăçлă тырпул туса илесси, пуринчен ытла, çуракине лайăх хатĕрленсе, ăна пысăк пахалăхпа ирттернинчен килнине звенори колхозниксем пурте аван пĕлсе тăнă. Çавăнпа вĕсем çуракине кĕркунне, авăн çапса пĕтернĕ хыççăнах, хатĕрленме тытăннă. Вăрлăхсем таса пулччăр тесе, вĕсене алăпа суйланă, çĕре тислĕкпе тĕрлĕрен удобренисем тăкса çемçетнĕ. Çуракине лайăх хатĕрленсе тухса, ăна агротехника катартса панă пек ăнăçлăн ирттернĕ. Калчасене имçамсемпе апатлантарнă, çумкурăксенчен тăтăшах тасатса тăнă.

Тăрăшса ĕçлени ахаль пĕтмен. Вĕсен çулран çулах тырпул ăнса пулнă. Çавна кура Василиса Степанова ертсе пыракан звенона 1943 çулта «вăйлă тырпул звени» тесе ят панă. Хисеплĕ ят звено членĕсене, çакăнпа пĕрлех Василисăна та савăнтарнă. Савăнмасăр, вĕсем Чăваш республикинче вăйлă тырпул звенисен юхăмне пуçарса яракансем пулчĕç-çке-ха!

Çĕнĕ ят çĕнĕрен ӳсĕмсем тума пулăшать. Василиса Степанова халĕ ĕнтĕ комсомолецсемпе çамрăксен вăйлă тырпул звенине ертсе пырать. Звенора пĕтĕмпех çамрăк хĕрачасем. Вĕсем, çĕнĕ вăй-хăватпа хавхаланса, татах та хастаррăнрах ĕçленĕ. Калчасем шăтса тухсанах, вĕсене кайăккĕшĕк тислĕкĕпе, фекали шывĕпе, сульфат-аммонипе икшер хутчен апатлантарнă, çумкурăксенчен тасатнă. Калчасене тимлесе пăхнипе, вĕсем хăвăрт та лайăх çитĕннĕ. Ытти звеносен участокĕсенчен уйрăмах паларса тăнă. Çапла вара вĕсем 1943 çулта кашни гектартан 110 пăт тулă туса илнĕ.

Тырпул ӳстассипе 1944 çулта кашни культура енĕпех гектартан 100-шер пăт тухăç туса илме çирĕплетнĕ. [illegible] 3,60 гектар урпа акнă, 1,5 гектар çĕрулми, 0,35 гектар тĕрлĕрен пахча-çимĕç лартнă. Çапла вĕсем кашни гектартан 15-шер центнер ыраш, 18-шар центнер тулăпа урпа туса илме сăмах панă.

Юратса пăхса çитĕнтернĕ тырпул уйхирте мухтавлăн кашласа ларать. Анса пулнă тырă мĕнпур колхозниксене савăнтарать. Çак участок çинчи тырра колхоз вăрлăх тума хăварнă. 14,6 гектар тырра звенори 9 çын виçĕ кун хушшинче вырса пĕтерме палăртнă. Звено членĕсем хăйсем ăçта ĕçлессине лайăх пĕлсе тăраççĕ.

«Победа» колхозăн уйхирĕ машинăсен шавĕпе янрать. Колхозниксем кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ, хиртен татăлмаççĕ. Машинăпа 56 çулхи А. Тимофеев колхозник тата звеновод Василиса Степанова выраççĕ. Опытлă çынсен аллинче машина пĕр çĕмĕрĕлмесĕр пырать. Çавăнпа та вĕсем хăйсен нормине 150—160 процент таран тултараççĕ.

Çамрăк комсомолка Василиса Степанова пур ĕçе те ĕлкĕрет. Вăлах колхозри чи лайăх агитаторсенчен пĕри. Тырă вырнă çĕрте кану вăхăтĕнче колхозниксене çĕнĕ хаçат-журналсем, художествăллă произведенисем вуласа парать, тĕрлĕрен темăсемпе калаçусем ирттерет, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе паллаштарать. Çав вăхăтрах Василиса фронтовиксемпе таччăн çыхăну тытса тăрать. Кăçалхи çичĕ уйăх хушшинче вăл фронтран çĕршер çыру илнĕ. Фронтовиксем, çамрăк патриоткăн ĕçĕпе интересленсе, малашне ăна тата пысăкрах çитĕнӳсем тума сунаççĕ. Василиса вĕсене хăйĕн ĕçĕсем тата тылри халăхăн патриотизмĕ çинчен пĕлтерсе тăрать.

Е. ЧЕРНОВ.

«Победа» колхоз, Вăрнар р.

Укерчĕк çинче: Муркаш районĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан колхозри бригадир **К. А. Ковалева** юлташ. Вăл бригадир пулса ĕçлеме тытăннăранпа (1941 çултан пуçласа) унăн бригади яланах малта пырать. Ковалева юлташ Хĕрлĕ Çар валли самолетсем тума 5.000 тенкĕ панă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Агитаци ĕçне пулăшать

КАЛИНИНО, августăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Кăмпалти „Новый путь" колхоз 110 гектар тырра 6 ĕç кунĕнче вырса пĕтернĕ. Çав вăхăтрах авăн çапса, хатĕрлев пунктне 20 центнер тырă леçнĕ. Ку тĕлĕшпе колхозра ягарласа транспорт бригади ĕçлет.

Агитациллĕ-массăллă ĕçе анлăн туса пыни уборкăра чылай пулăшать. Евграфовпа Михайлов бригадирсем, колхозниксемпе пĕрле ĕçлесе, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн „1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен" йышăннă постановленине ăнлантарса панă. Çавăнпа пĕрлех колхозниксене 5 кунта пĕрре вĕсем миçе ĕçкунĕ тунине пĕлтерсе тăраççĕ. Агитаторсем стена хаçачĕсем кăлараççĕ.

Халĕ колхозниксем çурхи тырăсем вырма тытанчĕç. Çавăн пекех кĕртыррисем акмалли çĕртме пуссине те хатĕрлеççĕ.

Е. ВОРОБЬЕВ.

Гĕр кунта 7,8 ĕçкунĕ тунă

ИШЛЕЙ. Мамăшри Буденный ячĕпе тăракан колхозра тырра кĕрепледлĕ çавасемпе çулассине лайăх йĕркеленĕ. К. Петравичус пĕр кунра 0,45 гектар ыраш çулса хăех çыхнă. Çапла вара вăл çав кун 7,8 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Ытти кунсенче те вăл çавăн пекех тухăçлăн ĕçлет.

Колхоз шорникĕсем

Шăмăршă районĕнчи «Заря» колхозра 3 бригада, кашни бригадăрах уйрăм шорник пур. Вĕсем ут таврашĕсене куллĕнех юсаççĕ, çавăнпа та колхозра сӳсменсем, ĕнерчĕксем тата ытти хатĕрсем яланах юсавлă. 3-мĕш бригадăра Григорий Кириллов шорник пулса ĕçлет. Çак бригадăра кашни лаша валли ут таврашĕ çителĕклĕ.

Кириллов шорник хăйĕн ĕçне мухтава тивĕçлĕ тăвать. Кирлĕ пулсан, вăл ытти ĕçре те лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. Çураки кунĕсенче вăл акакансен шутĕнче пулчĕ. Акмалли нормăна кашни кунах 150—170 процент таран тултарса пычĕ.

Канадăри пичет Сталин юлташа „Çĕнтерӳ" орденĕпе наградăлани çинчен

ОТТАВА, августăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Канадăри «Джорнэл» хаçат, Сталин юлташа «Çĕнтерӳ» орденĕпе наградăлани çинчен сăмах хускатса, хăйĕн умстатьинче Сталин юлташ çинчен çапла çырать: «Сталин çĕршывăн аслă руководителĕ кăна мар, çавăн пекех тата вăл мĕнпур вăхăтсенчи çар тĕлĕшĕнчи чи аслă гени пулса тăрать». Германи çарĕсем çав тери вăйлăн хĕснипе Хĕрлĕ Çар каялла чакнă чухнехи йывăр тапхăрта Сталин совет çĕршывне ертсе пынине статья пысăка хурса хаклать. Сталин ун чухне шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен çав тери паттăр пулнине, калама çук пысăк масштабпа пуçланă çак вăрçа питех те лайăх ăнланса илнине, хăйĕн халăхне тата хăйĕн тăшманĕн вăйсăр енĕсене тĕплĕн пĕлнине кăтартса пачĕ, тесе çырать хаçат. Германи, — тесе кăтартса парать хаçат, — малтанхи нумай çапăçусенче çĕнтерчĕ, анчах пĕтĕмĕшпе илсен, вăрçăра аяла пулчĕ. Сталин наступлени пуçласа ярсан, вăл кунта хăй пултарулăхĕн тепĕр енне — çар руководителĕн пысăк пултарулăхне кăтартса пачĕ. Сталин ертсе пыракан Хĕрлĕ Çар наступлени туса пынине пула, халĕ ĕнтĕ совет территорине пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех тăшманран тасатнă.

Юлашкинчен çӳлте асăннă статьяра çакна палăртнă: «Вырăс халăхĕ тĕлĕнмелле çирĕп те паттăр пулнине кăтартрĕ. Вырăс салтакĕсем хăюллăн та хастарлăн çапăçрĕç, анчах çаксем хыçĕнче Сталинăн, совет çĕршывĕн нимĕнпе те танлаштарма çук çулпуçĕн геройла сăнарĕ аслăн курăнса тăрать».

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Бретаньре Америка çарĕсем Сен-Назер тата Брест хулисем патне çитнĕ. Лаваль тата Майенн хулисене туртса илнĕ

ЛОНДОН, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем, ик еннелле те саралса пырса, Бретаньре хăвăрттăн малалла куçса пынă, Лудеак, Морон, Дерваль, Шатобриан тулашĕсене çитнĕ. Ренн хули союзниксен аллинче. Доль хулине тăшмантан тасатнă. Союзниксен малти чаçĕсем Фужер хулинчен иртсе кайнă.

Союзниксен ытти чаçĕсем Ландивирен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре малалла куçса пыраççĕ. Халĕ вĕсем Мортен хулишĕн çапăçаççĕ. Союзниксен малта пыракан чаçĕсем Барантон районне çитнĕ. Сен-Севeр вăрманĕн пысăк пайĕ союзниксен аллинче. Эвреси тата Эске пункчĕсене тăшмантан тасатнă. Халĕ союзниксен малти чаçĕсем Баконь тата Амейе-сюр-Орн районĕнче çапăçаççĕ.

Кунтан кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Ондфонтен пунктне туртса илнĕ, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Вир хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тăшман вăйлă контратакăсем тунă, анчах унăн контратакисем ăнăçлă пулман.

Союзниксен авиацийĕ ĕнер тăшманăн Францири объекчĕсене атакăланă. Августăн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле вăтам тата çăмăл бомбардировщиксем тăшман транспорчĕпе унăн пухăна-пухăна тăнă çарĕсене атакăланă».

НЬЮ-ЙОРК, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕнчен çапла пĕлтернĕ: Америка çарĕсем Сен-Назер хули патне çитнĕ тесе шутлаççĕ, çапла вара союзниксен çарĕсем Бретань çуруттравне татса илнĕ пулать. Американецсен малта пыракан чаçĕсем малтан пĕлтернинчен чылай малалла кайнă пуль тесе шутлаççĕ.

ЛОНДОН, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин ятарласа янă корреспонденчĕ Бретаньрен çапла пĕлтерет: Америка çарĕсем Брест хули патне çитнĕ.

ЛОНДОН, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Бретаньре союзниксен бронетанковăй вăйĕсем Редон патне çитнĕ. Ытти чаçсем тăшмана Доль хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре атакăланă. Витр тата Понтиви пункчĕсене тăшмантан тасатнă. Динанра, Реннгра тата Витрта эсэсовецсен бронетанковăй чаçĕсенче тăнă салтаксене тыткăна илнĕ. Союзниксен ударлă отрячĕсем тăшманпа Сен-Мало хули çывăхĕнче çапăçма пуçланă.

Ĕнер ирхине тăшман Ренн, Монторсоп тата Авранш хулисем çине бомбăсем пăрахнă. Вăл кӳнĕ сиен пысăках мар.

Нормандире союзниксен çарĕсем Сен-Север вăрманĕ урлă тухса малалла кайнă. Шан-дю-Буль патĕнче тăшман пехоти пирĕн çарсене хирĕç тăрать. Тăшманăн бронетанковăй чаçĕсемпе парашют çарĕсем Мениль-Жильбер хулинче пирĕн çарсене наступлени тума кансĕрлеççĕ. Союзниксен çарĕсем Вир хулин варринчи пайĕнчен 1.500 ярдра тăраççĕ. Кунтан çурçĕртерехре наступлени вăхăтĕнче тыла тăрса юлнă тăшман чаçĕсене пĕтерсе пыраççĕ. Союзниксен çарĕсен малти чаçĕсем Онэ-сюр-Одона кĕнĕ. Орн шывĕн хĕвеланăç хĕрринче союзниксен çарĕсем кăнтăралла наступлени туса пыраççĕ. Кунти пĕтĕм çӳллĕ вырăн Тюри-Аркур хулинчен пĕр миля çурçĕртерехре ларакан Ле-Ом ялĕ патне çитиччченех пирĕн алăра.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн вăрçă объекчĕсене чылайĕшне тапăннă».

ЛОНДОН, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка çарĕсем Бретаньре Лаваль тата Майенн хулисене туртса илнĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ФЛОРЕНЦИ ХУЛИНЕ КĔНĔ

ЛОНДОН, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Флоренци хулинчен кăнтăртарахра акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем самаях малалла кайнă. Союзниксен çарĕсем августăн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Эма шывĕ урлă каçнă та тăшманăн çав шыв хĕрринчи хирĕç тăмалли Галуццо ятлă узелне туртса илнĕ, вара августăн 4-мĕшĕнче ирхине ирех Флоренци хулин тулашне пырса тухнă.

Сылтăмри флангра икĕ кун каярах пĕр çӳллĕ вырăна туртса илнĕ, новозеландецсен чаçĕсем самаях малалла кайнă.

Кунтан хĕвеланăçнерехре Инди дивизийĕн чаçĕсем хăйсен Пеза шывĕн сылтăм хĕрринчи плацдармĕнчен çурçĕрелле куçнă, халĕ вĕсем Синья хулине çитесси пĕр километр кăна юлнă.

Флоренци хулинчен хĕвелтухăçнерехре акăлчансен пĕр дивизийĕн чаçĕсем Флоренци хулинчен 3 миля аяккарахра ларакан Баньо а Риполи пунктне туртса илнĕ. Флоренци хулинчен çурçĕртерехре Арно шывĕ çине тухасси пĕр километр кăна юлнă. Флоренци хулинчен 10 миля хĕвелтухăçнерехре ларакан Понтассиеве хули патнелле пыракан акăлчансен ытти чаçĕсем Понтассиеве хулинчен 5 миля кăнтăртарахра ларакан Риньяно пунктне туртса илнĕ.

Союзниксен тактика авиацийĕ ĕнер тăшманăн Çурçĕр Италири, Кăнтăр Францири тата çапăçу районĕнчи çулйĕрĕсемпе ытти вăрçă объекчĕсене тапăннă. Союзниксен авиацийĕн ытти отрячĕсем Кăнтăр Албанири вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Алжирти радио панă хыпара пĕлтерет. Çав хыпар тăрăх, акăлчансен 8-мĕш армийĕнчи Кăнтăр Африка чаçĕсем Флоренци хулин варрине кĕнĕ.

ЛОНДОН, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Флоренци районĕнче 8-мĕш армин чаçĕсем Арноран кăнтăртарахра тăшманăн хирĕç тăмалли узелĕсене пĕтерсе пынă. Халĕ вĕсем Арно шывĕн кăнтăр хĕрринче лайăх çирĕпленсе ларнă. Вĕсем тăшман çывăхĕнчех тăраççĕ. Кунтан хĕвел тухăçнерехре 8-мĕш армин чаçĕсем Альтуччиа ятлă çӳллĕ вырăна туртса илнĕ. Ку вырăн Арно улăхĕпе Тибр шывĕн вăтам юхăмĕнчи улăхĕ хушшинчи туллăсăртлă вырăнсенчен чи çӳлли пулса тăрать.

Адриатика секторĕнче союзниксен çарĕсем Миза шывĕнчен çурçĕртерехре 3—4 километр малалла кайнă, Адриатика хĕрринчи Сенигалли хулинчен 4—5 километрта ларакан Скапеццано хулине туртса илнĕ те тăшманпа хуларан çурçĕртерехре çапăçма пуçланă. Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Союзниксен авиацийĕ тăшман позицийĕсемпе çулйĕрсем çине бомбăсем пăрахнă.

„Шанчăксăр" генералсемпе офицерсене айăплама Гитлер хăйне уйрăм суд тунă

ЖЕНЕЗА, августăн 4 мĕшĕ (ТАСС). Берлинра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Гитлер офицерсене айăплама хăйне уйрăм суд тунă; çав судăн „Германи çарне пĕр шеллемесĕр тасатма, июлĕн 20-мĕшĕнче Гитлера тапăннă çĕре хутшăннă çынсене çарган кăларма пуçламалла".

Гитлерăн приказĕнче çапла каланă: çак судăн „Гитлера вĕлерес ĕçе мĕн чухлĕ те пулин хутшăннă çынсене, армирен хăваласа кăларса ямаллисене тата кама чи малтан кăларса ямаллине палăртмалла", тенĕ. Приказра тата çапла каланă: судăн хăйĕн решенийĕсене çирĕплетме Гитлер патне ямалла. Германи çарĕнчен хăваласа кăларнă çынсен ĕçĕсене вара граждăнла трибуналсем пăхса тухаççĕ, тенĕ.

Çапла пĕлтернĕ: августăн 4-мĕшĕнче Гитлер тунă судăн пĕрремĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Çав ларура çартан çак çынсене хăваласа кăлармалла тунă:

а) арестленĕ шутланса тăракан çынсене — генерал-фельдмаршала фон Витцлебена, çыхăну çарĕсен генералне Фельгибеля, фон Хазе генерал-лейтенанта, Штиф генерал-майора, фон Трешов генерал-майора генеральнăй штаб полковникне Гансена, запасри обер-лейтенанта фон дер Шуленбург графа тата ытти чылай офицерсене;

б) июлĕн 20-мĕшĕнче персе вĕлерне инфантери генералне Ольбрихта, генеральнăй штаб полковникĕсене фон Штауффенберга тата фон Квирингейма, обер-лейтенента Хафтена; в) „Гитлера вĕлерес ĕçе хăйсем хутшăннине хăйсене хăйсем персе вĕлернипе палăртнă сутăнчăксене"—генерал-полковника Бека, артиллери генералне Вагнера, генеральнăй штаб полковникне фон Фрейтаг Лорингофена тата Шредер подполковника; г) çартан тарнă артиллери генералне Линдемана тата генеральнăй штаб майорне Куна. Суд постановленийĕнче çапла кăтартса панă: Геппнер генерал-полковника Германи çарĕнчен хăваласа кăлармалли çук, мĕншĕн тесен ăна 1942 çултах хăваласа кăларнă.

Берлинра пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Гитлер çак решенисене çирĕплетнĕ, çартан хăваласа кăларнă генералсемпе офицерсене суд парассĕ, тенĕ.

Гитлер пропаганди Гитлера хирĕç тунă заговора офицерсен питĕ пĕчĕк пайĕ çеç хутшăннă, çав заговора пĕтерсе лартма 6 сехет çеç вăхăт кирлĕ пулчĕ, тесе суйса пĕлтернĕ. Пăлханнă генералсемпе офицерсене хаяррăн тыткăлас тĕлĕшпе йышăннă çак çĕнĕ мерăсем çапла суйса каланине тепĕр хут сирсе ярассĕ.

Союзниксен 1.100 бомбардировщикĕ ытла Германие тапăннă

ЛОНДОН, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: августăн 5-мĕшĕнче союзниксен 8-мĕш авиаци корпусĕнче тăракан «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши бомбардировщиксем, мĕн пурĕ 1.100 самолет ытла, Германин нумай объекчĕсене тапăннă, вăл шутра — Доллберген хулинчи нефть тасатакан завода, Фаллерслебен хулинчи нефтехранилищĕсене, Магдебург хулинчи вăрçă хатĕрĕсем тăвакан завода, Ганновер, Лангенхаген тата Хальберштадт хулисенчи аэродромсене, çавăн пекех тата Брауншвейг хулипе Магдебург хули районĕнчи ытти объектсене те. Çанталăк лайăх тăнă, бомбăсем пăрахнă чухне çĕр çинчи объектсем лайăх курăнса тăнă. Çав 1.100 бомбардировщика ытла «Мустанг», «Сандерболт» тата «Лайтнинг» йышши истребительсен пысăк соединенийĕсем хӳтĕлесе пынă.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ БЕРЛИН, ГАМБУРГ ТАТА КИЛЬ РАЙОНĔСЕНЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра çапла пĕлтернĕ: паян кăнтăрла «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши 1.000 бомбардировщик ытла Францири промышленность предприятийĕсене, Берлин, Гамбург, Киль районĕсенчи нефть тасатакан заводсене, аэродромсемпе портсене, çавăн пекех тата Па-де-Кале районĕнчи самолет-снарядсен базисене тапăннă.

ГИТЛЕРĂН ВАТИКАНРИ ПОСОЛĔ БЕРЛИНПА ÇЫХĂНУ ТЫТМА ПĂРАХНĂ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио Америкăн Римри корреспондентĕнчен илнĕ хыпара пĕлтернĕ. Çав хыпар тăрăх, Германин Ватиканри посолĕ барон фон Вейцзекер Германи правительствипе çыхăну тытма пăрахнă. Папа патĕнче пулнă хыççăн Вейцзекер çапла каланă: эпĕ текех нацистсен правительствин посолĕ пулса ĕçлеме килĕшместĕп, тенĕ.

НИМĔÇСЕМ ТУРЦИРЕ ГИТЛЕРЛА СЛУЖБĂРАН ТАРНИ

АНКАРА, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Турци влаçĕсем нимĕçсене Турцирен тухса кайма вунă кунлăх срок панă. Вунă пин нимĕç ытла ĕнтĕ çĕршывран тухса кайнă та. Нимĕçсем нумайĕшĕсем Германие таварăнасшăн мар. Вĕсем Стамбулран Германие каякан поездсем çинчен малтанхи станцисенчех ана-ана тараççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ фон Папен «уйрăмах шанчăксăр» çынсене, вĕсем ниепле те тарма ан пултарччăр тесе, ятарласа самолетсемпе ăсатма хушнă. Нимĕçсем нумайĕшĕсем хăйсене Турцирех хăварма ыйтса Турци влаçĕсене заявленисем параççĕ.

СТАМБУЛРА «ТЮРКИШЕ ПОСТ» ТАТА «БЕЙОГЛУ» ХАÇАТСЕНЕ ХУПНА

СТАМБУЛ, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Турци влаçĕсем хушнă тăрăх, «Тюркише пост» тата «Бейоглу» хаçатсене хупнă.

ССР Союзĕн Прокуратуринче

Юлашки вăхăтра Прокуратура органĕсем предприятисемпе учрежденисен ĕçлĕ çыннисене чылайĕшне, çавăн пекех тата колхоз председателĕсене уголовнăй йĕркепе ответ тыттармалла тунă. Вĕсене вăрçă промышленноçĕн предприятийĕсенчен тухса тарнă çынсене пулăшнă тата пытарса усранă тесе айăплаççĕ.

Вăрçă промышленноçĕн предприятийĕсенчен тарнă çынсене пулăшнăшăн тата пытарса усранăшăн судсем çакăн пек наказани панă:

Кемерово облаçĕнчи Сталинск хулинчи алюмини завочĕн кадрсен отделĕн пуçлăхне А. В. Горбунова 10 çуллăха, çав заводри личнăй столăн заведующине М. М. Захарова 5 çуллăха хупса лартмалла тунă;

Иваново облаçĕнчи Пестяковски районри Барановски ялсоветăн председательне А. В. Комнева 5 çуллăха хупса лартмалла тунă;

Киров облаçĕнчи Арбаж районĕнчи Самохваловски колхоз председательне И. В. Смирнова 3 çуллăха хупса лартмалла тунă; çавăн пекех тата ыттисене те айăпланă.

ССР Союзĕн Прокурорĕ Прокуратурăн вырăнти органĕсене çак тĕлĕшпе тивĕçлĕ кăтартусем панă.

Пĕлтерӳ

Августăн 9-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Пионерсен çуртĕнче агитколлективсен руководителĕсемпе парторганизацисен секретарĕсем валли лекци пулать. Лекци теми: **«Совет Союзĕн çарпа политика лару-тăравĕпе тĕнчери лару-тăравĕ».**

Лекцие ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн пропаганда группин руководителĕ **Масленников** юлташ вулать.

Лекци итлеме партбилетсемпе кĕмелле.

ВКП(б) горкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

паян, августăн 8-мĕшĕнче,

ЮЛАШКИ КУН

американецсен илемлĕ çĕнĕ фильмне

«СЕРЕНАДА СОЛНЕЧНОЙ ДОЛИНЫ»

кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 10, 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Ыран, августăн 9-мĕшĕнче, музыкăллă çĕнĕ фильм

«ЖИВИ, РОДНАЯ БЕЛАРУСЬ!»

кăтартма пуçлаççĕ.

«Заготживсырье» конторине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: тĕрлĕ кайăксем ӳстерес ĕçе пĕлекен зоотехник, оперативнăй учет начальникĕ; тир-сăран, мамăклă тир, çăм ĕçĕсене пĕлекен специалистсем, бухгалтерсем тата çăмăл машинăпа çӳреме шофер кирлĕ.

Ĕçлеме илнĕ çынсене хваттер параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 31. Телефоны 6—42, 2—61.

Турци Германипе дипломатиллĕ тата экономикăллă çыхăну тытма пăрахни пирки

(ТАСС обозревателĕн статьи)

Турци правительстви Германипе дипломатиллĕ тата экономикăллă çыхăнусем тытма пăрахасси çинчен решени йышăнни пирки ют çĕршывсенчи политика çыннисем тата ют çĕршыв пичечĕ питех те интересленсе калаçаççĕ, çыраççĕ. Турци правительствин решенине тата çав решени мĕнле вырăн йышăнса тăнине тĕрлĕ ушкăнсем тĕрлĕрен хак параççĕ.

Çакă паллă: вăрçă пуçлансан, Турци 1939 çулхи октябрĕн 19-мĕшĕнче Англипе тата Франципе союзлă пуласси çинчен Анкарара договор тунăччĕ. Анчах çакă Турци правительствине 1941 çулхи июнĕн 18-мĕшĕнче Германипе туслă пуласси çинчен договор тума тата çакăнпа пĕрлех чылай вăхăт хушши хăйĕн позицине нейтралитет тытакан çĕршывăн позицийĕ пулать тесе пĕлтерсе тăма чăрмантармарĕ. Англири «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçатăн обозревателĕ калашле, çĕрессипе ĕç çапла пулса пынă: Турци мĕнпур юлашки тапхăрта хăйĕн политикипе Германие вăрçă ĕçĕсенче паха пулăшу парса тăнă.

Турци Германие стратеги тĕлĕшĕнчен пахалă чĕртавар, уйрăмах хром руди, парса тăнă. 1943 çулта тупнă 100 пин тонна хром рудинчен Турци 47 пин тонна Германие ăсатнă. 1944 çулта çав поставкăсем татах та ытларах ӳснĕ, кăçалхи çулăн малтанхи виçĕ уйăхĕнче кăна Турци Германие хром руди 25 пин тонна ăсатнă. Çавăн пекех Германие çĕрмамăкĕ, пăхăр, çу тумалли культурăсен вăрлăхĕсем, çăм, тир-сăран тата ытти япаласем те нумай ăсатса тăнă. Стамбулра тухакан «Экономист д'ориан» журнал январĕн 10-мĕшĕнчи хăйĕн номерĕнче «Германи Турцирен ют çĕршывсене сутакан таварсен 90 процентне илсе тăрать» тесе кăтартса панă.

Турци Германие вăрçă ĕçĕсенче пулăшса пырасси экономика ыйтăвĕсемпе — Германие чĕртаварпа апат-çимĕç парса тăнипе кăна çырлахман. Америкăри «Кроникл» хаçат палăртнă тăрăх, «вырăссем йывăр лару-тăрура пулнă чухне, Турци нейтралитечĕ нимĕçсене пулăшса тăни çинчен, çав нейтралитет нимĕçсен кăнтăр хĕвелтухăçĕнчи флангне хӳтĕлесе тăни çинчен Анкарана кăтартса панăччĕ».

Нумаях та пулмасть, июнĕн 1-мĕш числисенче кăна-ха, Турци влаçĕсем хăйсен проливĕсем витĕр Эгей тинĕсне Германин çар суднисене кăларса яни çинчен калакан фактсене тăрă шыв çине кăларнăччĕ.

Çапла вара, çак вăрçă пыракан чылай пысăк тапхăрта Турцин ертсе пыракан çыннисем гитлерла Германие пулăшса тăракан политикăна пурнăçа кĕртсе пынă. Виçĕ союзлă держава—Великобританипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем тата ССР Союзĕ—иртнĕ çулăн вĕçĕнче Турцие Германишĕн кăна усăллă пулса тăракан хăйĕн тулашри политикине пĕтерме кирли çинчен кăтартса парсан та, Турцири ертсе пыракан ушкăнсем çав кăтартăва пурнăça кĕртессинчен пăрăнчĕç. Çавăн пек хăтланни вара вăл хальхи вăрçа вăраха тăсма кăна пулăшма пултарчĕ. Çавăн пек политика Турцин хăйĕн интересĕсене сиен кӳни çинчен, Турци деморкатиллĕ çĕршывсемпе чылай çулсем хушши тытакан политикăллă тата экономикăллă çыхăнусене сиен кӳни çинчен уйрăмăн палăртса калама та кирлĕ мар. Турци тулашри политикăра çавăн пек çул тытса пыни, пуринчен ытларах, фашистла нимĕç пропаганди, союзниксен лагерĕ «пурĕпĕрех» саланса каясси çинчен саракан пропаганда, Турцири ертсе пыракан çынсен пуçĕсене çаврăнинчен тата çак вăрçăра гитлерла Германи çĕнтерессине ытлашши шанса тăнинчен килнĕ.

Пурнăç Турци политикĕсен ĕмĕчĕсене ӳпĕнтерсе хучĕ. Фактсем çакна кăтартса пачĕç: вăрçă пынă вăхăтра Англипе Совет Союзĕ тата Америка хушшинчи çыхăнусем вăйсăрланмарĕç кăна мар, нумай çирĕпленчĕç. Мускаври конференци хыççăн çавна ăна Тегеранри конференци татах та уççăнрах çирĕплетсе пачĕ. Анчах çакна пăхмасăрах, Турци хăйĕн тулашри политикине малтанхи пекех тытса пычĕ.

Халĕ ĕнтĕ çакă питех те уççăн курăнса тăрать: Турци правительстви Германипе дипломатиллĕ тата экономикăллă çыхăнусем тытма пăрахасси çинчен калакан хăйĕн хальхи решенине, пуринчен малтан, вăрçă хыççăн Турци политика тĕлĕшĕнчен пĕччен тăрса юласси çинчен шикленнине пула йышăннă. Çав шикленĕве ăна, ыттисемпе пĕрлех, Турцин тулашри политики пирки Турци пичечĕн страницисем çинче нумаях пулмасть пуçланнă тавлашу та кăтартса парать. Çавнах ĕнтĕ Турцин ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Менеменджиоглуна, Турцин çӳлерехре кăтартнă тулашри политикине пĕтĕçтерсе тăнăскере, вырăнтан кăларни те çирĕплетсе парать.

Иккĕленмелли çук, Турци Германипе дипломатиллĕ тата экономикăллă çыхăнусем тытма пăрахни гитлерла правительствăна çĕнĕрен пăшăрхантармасăр хăварма пултараймасть. Ку решенин союзлă çĕршывсемшĕн усăллă енĕ çавăнта пулса тăрать те ĕнтĕ. Çавăнпа та хальхи вăхăтра гитлерла пичет ӳпкелешме тытăннинчен, Турци правительствин решенине хирĕç тăрăхса çырнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук.

Кунпа пĕрлех çакна та палăртмасăр иртсе кайма çук: ют çĕршыв пичечĕн чылай органĕсенче халĕ, Хĕрлĕ Çарпа союзниксем геройла вăй хурса кĕрешнине пула тата çав кĕрешĕве Турци нихăш енĕпе те хутшăнман пулин те вăрçă Гитлера хирĕçле коалицишĕн усăллă пĕтесси курăнса тăнă чухне, Турци хăйĕн тулашри политикинче питĕ кая юлса çаврăну тунине ытлашши пысăка хурса хаклама кирлех те маррине кăтартса параççĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçат çапла çырать: Америкăри официальнăй çынсен ушкăнĕсем — «Турци Германипе çыхăну тытассине чылай маларах татмаллачĕ» тата «Турци Германипе çыхăну тытма тин пăрахни халĕ ĕнтĕ ытлашши паха ĕçех пулса тăмасть» тесе шутлаççĕ. Англире тухакан «Нью Стейтсмен энд Нейшн» журнал çакна питех те тĕрĕс палăртать: «вăрçă çилĕ ăçталла çаврăнассине пĕлес тесе пилĕк çул хушши кĕтсе тăнă хыççăн, Турци правительстви халĕ ĕнтĕ, союзниксем çĕнтерессине пĕр хăрамасăрах ĕненсе, хăйĕн татăклă решенине йышăнма шутларĕ». Англин «Экономист» журналĕ каланă тăрăх, Турци правительствин юлашки вăхăтри решенийĕ хальхи тапхăрта ĕнтĕ «вăрçă малашне мĕнле пулса пырасси çине нимĕнле влияни те пама пултараймасть».

Турци Германипе дипломатиллĕ тата экономикăллă çыхăнусем тытма пăрахасси çинчен йышăннă решени пирки каланă чухне çакна манмалла мар: Турцин çав решенийĕ вăл гитлерла Германие хирĕç йывăр кĕрешӳ туса пыракан государствăсен ретне тăнине пĕлтермест-ха. Çакăнпа пĕрлех, Турци Германи сателличĕсемпе, уйрăмах Совет Союзне тата демократиллĕ ытти çĕршывсене хирĕç гитлерла Германипе союзлă пулса тăрса вăрçă вăрçакан Венгрипе тата Румынипе халĕ те-ха чи çывăх çыхăнусем тытса тăрать.

Н. БОДРОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00625 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 16.000 экз.